27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945
ФЕВРАЛЬ
28
ЮНКУН
89(6790) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТАШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Белоруссири 2-мӗш фронт ҫарӗсен командующине
Совет Союзӗн Маршалне РОКОССОВСКИЕ
Фронт штабӗн начальникне
Генерал-полковника БОГОЛЮБОВА

БЕЛОРУССИРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем, малалла тапӑнса пырса, ХОЙНИЦЕ (КОНИТЦ) хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ та тӑватӑ кун хушши ҫапӑҫса, 70 километр малалла куҫнӑ.

Малалла тапӑнса пынӑ вӑхӑтра фронт ҫарӗсем ПОМЕРАНИ ҫӗрӗ ҫинче ШЛОХАУ, ШТЕГЕРС, ХАММЕРШТАЙН, БАЛЬДЕНБЕРГ, БУБЛИЦ хулисене—ҫулйӗрсен пахха узелӗсене тата нимӗҫсен оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пункчӗсене туртса илнӗ.

Асӑннӑ хуласене туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче ҫаксем чапа тухнӑ: КОЗЛОВ генерал-лейтенанчӗн, ЛОГУНОВ генерал-лейтенантӑн, ПОПОВ генерал-полковникӑн, ЛЯПИН генерал-лейтенантӑн, МИКУЛЬСКИЙ генерал-лейтенантӑн, СКОРОБОГАТКИН генерал-майорӑн, ДРАТВИН генерал-лейтенантӑн, ЧАНЫШЕВ генерал-лейтенантӑн, ХУДАЛОВ генерал-майорӑн, ГРЕБЕНКИН полковникӑн, ХРАМЦОВ полковникӑн, ЦЫГАНКОВ полковникӑн, БЕЛОСКУРСКИЙ генерал-майорӑн, МЕШКОВ полковникӑн, РОГОВ полковникӑн, МЕЛЬДЕР полковникӑн, АБДУЛЛАЕВ полковникӑн, ФЕДОТОВ полковникӑн, ГУСЕВ генерал-майорӑн, БЕЛЯЕВ полковникӑн, ТРУДОЛЮБОВ полковникӑн, МУРАТОВ полковникӑн ҫарӗсем; ОСЛИКОВСКИЙ генерал-лейтенантӑн, ЧЕПУРКИН генерал-майорӑн, КАЛЮЖНЫЙ генерал-майорӑн, БРИКЕЛЬ генерал-майорӑн кавалерисчӗсем; артиллери генерал-полковникӗн СОКОЛЬСКИН, артиллери генерал-майорӗн БЕЗРУКАН, артиллери генерал-лейтенанчӗн БЕСКИНАН, артиллери генерал-майорӗн ЛИХАЧЕВАН, артиллери генерал-майорӗн КОЗНОВАН, ЗАХАРОВ полковникӑн, ЛЕОНОВ полковникӑн, ЖУКОВ полковникӑн, САКИН полковникӑн, ВОЙЦЕХОВСКИЙ подполковникӑн, СУКАЧЕВ полковникӑн артиллерисчӗсем; танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн ЧЕРНЯВСКИН, танковӑй ҫарсен генерал-лейтенанчӗн ПАНФИЛОВАН, УРБАНОВ полковникӑн, ЕГОРОВ подполковникӑн, КУРЦ подполковникӑн, РЯЗАНЦЕВ подполковникӗн танкисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн ВЕРШИНИНАН, КАЛУГИН полковникӑн, ДОДОНОВ полковникӑн, РЫБАКОВ полковникӑн летчикӗсем; инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн БЛАГОСЛАВОВАН, инженери ҫарӗсен генерал-майорӗн ВИТВИНИНАН, НЕМИРОВСКИЙ полковникӑн, КЛЕМЕНТЬЕВ полковникӑн, ПОЛОВНЕВ инженер-полковникӑн, АМЕЛЬЧЕНКОВ подполковникӑн, СТАРОВОЙТ майорӑн саперӗсем; ИЛЬИН подполковникӑн, БРАТУСЬ подполковникӑн, КУРБАТОВ подполковникӑн, ГРАДЕЦКИЙ майорӑн связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ ҫӗнтерӗве ялан асра тытас тесе, ШЛОХАУ, ШТЕГЕРС, ХАММЕРШТАЙН, БАЛЬДЕНБЕРГ, БУБЛИЦ хулисене туртса илессишӗн ҫапӑҫса уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаҫсене орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, февралӗн 27-мӗшӗнче, 22 сехетре пирӗн Тӑван ҫӗршыв столици МУСКАВ, иксӗр ҫирӗм тӑватӑ тупӑпа ҫирӗм хут пӗр харӑс персе, Белоруссири 2-мӗш фронтӑн паттӑр ҫарӗсене, ҫӳлерехре асӑннӑ хуласене туртса илнӗскерсене, Тӑван ҫӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан ҫарсене, Померанин асӑннӑ хулисене туртса илессишӗн пынӑ ҫапӑҫусенче пулнӑскерсене, питӗ чаплӑ ҫапӑҫнӑшӑн ТАВ ТАВАТАП.

Хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн ҫапӑҫса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗҫ захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ ***И. СТАЛИН.***

1945 ҫулхи февралӗн 27-мӗшӗ. № 285.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

Верховный Главнокомандующине Совет Союзӗн Маршалне СТАЛИН юлташа

Хаклӑ Иосиф Виссарионович!

3064-мӗш номерлӗ эвакогоспитальти медицина работникӗсем, рабочисемпе служащисем, Сирӗн чаплӗ докладӑрпа тата приказӑрпа хӗҫпӑшаллӑнӑ Хӗрлӗ Ҫарӑн историллӗ ҫӗнтерӗвӗсемпе хавасланса, Хӗрлӗ Ҫар 27 ҫул тултарнине кӗтсе илме лайӑх хатӗрленес тата фашистла тискер кайӑка хӑйӗн йӑвинче хӗвӑртрах пӗтерсе тӑкма Хӗрлӗ Ҫара пулӑшас тесе, хӑйсем перекетленӗ укҫа-тенке иккӗмӗш боевой самолет туянма хывнӑ.

Хаклӑ Иосиф Виссарионович, Сирӗнтен эпир хамӑр туянӑ самолета пирӗн земляка-летчика Совет Союзӗн Геройне подполковник Борис Михайлович Васильева пама ирӗк ыйтатпӑр.

Сире, Иосиф Виссарионович, хамӑрӑн аслӑ Тӑван ҫӗршыв ырлӑхӗшӗн нумай ҫулсем пурӑнма сывлӑх сунатпӑр.

3064-мӗш эвакогоспиталь начальникӗ—медицина службин капитанӗ
СОКОЛОВ.

Госпиталь начальникӗн политика енӗпе ӗҫлекен заместителӗ —
капитан БУРМИСТРОВ.

Пуҫламӗш парторганизаци секретарӗ
ВАСИЛЬЕВ.

Местком председателӗ БОРИСОВА.

3064-мӗш Эвакогоспиталь начальникне Медицина службин капитанне Соколова Госпиталь начальникӗн политика енӗпе ӗҫлекен заместительне Бурмистров капитана Пуҫламӗш парторганизаци секретарьне Васильева Местком председательне Борисовӑна

3064-мӗш Эвакогоспитальре ӗҫлекенсене, Хӗрлӗ Ҫар валли иккӗмӗш санитарнӑй боевой самолет туянма укҫа пухнӑскерсене, манран боевой салам калӑр тата Хӗрлӗ Ҫар тав туни ҫинчен пӗлтерӗр.

И. СТАЛИН.

Иккӗ уйӑхри программӑна срокчен тултарнӑ

ҪЕМЕРЛЕ. Комбинат коллективӗ январьпе февраль уйӑхӗсенчи производство программине Хӗрлӗ Ҫар кунӗ тӗлне тултарма обязательство илнӗччӗ. Коллектив ҫак обязательствӑна чыслӑн пурнӑҫланӑ. Февралӗн юлашки эрнинче комбинат уйӑхри программӑран ирттерсе продукци туса кӑларать.

Цехсем хушшинчи социализмлӑ ӑмӑртура Павлов юлташ начальник пулса ӗҫлекен цех мала тухнӑ. Вӑл уйӑхри производство планне пуринчен малтан тултарнӑ. Ҫавӑншӑн цеха комбинатӑн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ ялавне панӑ.

Ӑмӑртура иккӗмӗш вырӑна Болотов юлташ начальник пулса тӑракан цех йышӑннӑ. Пулӑшакан цехсенчен Московченко юлташ ертсе пыракан цех лайӑх ӗҫленӗ.

Союзлӑ виҫӗ державӑн—Совет Союзӗн, Великобританин тата Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен—руководителӗсен Крымра пулса иртнӗ конференцийӗн решенийӗсемпе хавхаланса, комбинатри чылай рабочисемпе работницӑсем стахановла вахтӑна тӑнӑ. Велединский, Коршунова тата Малов рабочисем стахановла вахта кунӗсенче нормӑна 300—350-шар процент тултарса пынӑ.

Верховный Главнокомандующи Совет Союзӗн Маршалӗ И. Сталин юлташ Хӗрлӗ Ҫар 27 ҫул тултарнӑ ятпа панӑ приказа ответлесе, комбинат коллективӗ ҫак кунсенче татах та тухӑҫлӑрах ӗҫлет.

Государствӑн Виҫҫӗмӗш Военнӑй Заемне подписчиксене валеҫсе парасси

Рабочисемпе служащисене февралӗн иккӗмӗш ҫуррипе ӗҫукҫи тӳленӗ вӑхӑтра Государствӑн Виҫҫӗмӗш Военнӑй Заемӗшӗн тӳлемелли укҫан юлашки пайне тытса юлаҫҫӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн вара облигацисене алла валеҫсе пама тытӑнаҫҫӗ.

ВЦСПС секретариачӗ фабзавкомсемпе месткомсене кашни предприятире облигацисене вӑхӑтра илсе, рабочисемпе служащисене вӑхӑтра валеҫсе панине тӗрӗслесе тӑма хушнӑ. (ТАҪС).

Совет Информаци Бюровӗнчен

ФЕВРАЛӖН 26-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Февралӗн 26-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ЗЕМЛАНД ҫурутравӗнче, КЕНИГСБЕРГ хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре, тӑшман пехотипе танкӗсен атакисене йӑнӑҫлӑн сирсе-сирсе янӑ. КЕНИГСБЕРГ хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, тӑшманпа ҫапӑҫса, ЭРНСТФЕЛЬДЕ, ДЮСТЕРВАЛЬДЕ, НАУССЕДЕН, ХАЙЛИНГЕНХОФ, ЯННИТЦ ялӗсене туртса илнӗ.

Февралӗн 25-мӗшӗнче КЕНИГСБЕРГ хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехри районсенче нимӗҫсен 69 танкӗне хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ.

БРЕСЛАУ хули районӗнче пирӗн ҫарсем хупӑрласа илнӗ тӑшман группировкине пӗтерсе тӑкассишӗн ҫапӑҫнӑ, 15 квартал туртса илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ тата разведчиксем шыраса ҫӳренӗ.

Февралӗн 25-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 125 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 31 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Хӗвелтухӑҫ Пруссире, Кенигсберг хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре, тӑшман пехотипе танкӗсем темиҫе хутчен те атакӑланӑ. Пӗр участокра нимӗҫле ситӗнӳ те тӑвайман, нимӗҫсем тепӗр участокра атакӑланӑ. Совет чаҫӗсем, питӗ вӑйлӑ персе тӑрса, гитлеровецсене каялла хӑвала-хӑвала янӑ. Пирӗн позицисем патне пымалли вырӑнсенче тӑшман вилисем нумай выртса юлнӑ тата унӑн ҫӗмӗрсе тӑкнӑ техникипе хӗҫпӑшалӗ нумай тӑрса юлнӑ.

Кенигсберг хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем, нимӗҫсем хытӑ хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкса, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта йышӑннӑ, вӑл шутра шоссе ҫулӗсен узелӗ пулса тӑракан Эрнстфельде ялне туртса илнӗ.

Цинтен хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре нимӗҫсен 123-мӗш пехотнӑй полкӗн пӗр ротине унӑн командирӗпе пӗрлех тыткӑна илнӗ. Кӑнтӑр енчен ҫурҫӗрелле наступлени туса пыракан совет чаҫӗсем тӑшманӑн темиҫе дотне туртса илнӗ. Кун ҫиччен 2.000 гитлеровеца ытла вӗлернӗ, 33 тупӑ тата 200 пулемет ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Трофейсем тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Бреслау хулинче пирӗн ҫарсем хупӑрласа илнӗ тӑшман группировкине пӗтерсе тӑкассишӗн ҫапӑҫнӑ. Нимӗҫсем хула урамӗсенче баррикадӑсем лартса тултарнӑ, канавсем алтса тухнӑ, нумай ҫуртсенчен оборонӑн вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ узелӗсем туса хунӑ. Советсен штурмлакан ушкӑнӗсем, ҫине тӑрсах малалла куҫса пырса, пӗр ҫурт хыҫҫӑн тепӗр ҫурта нимӗҫсенчен тасатаҫҫӗ. Гинденбург площачӗшӗн уйрӑмах хаяр ҫапӑҫусем пулса иртнӗ. Пирӗн пехотинецсем, саперсем тата артиллеристсем ҫав площадьре ҫирӗпленсе ларнӑ тӑшмана виҫӗ енчен атакӑланӑ. Нимӗҫсене хӗскӗчпе хӗстерсе лартнӑ. Вӑйлӑ ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн площаде пирӗн ҫарсем туртса илнӗ. Пирӗн ытти чаҫсем трамвай паркне йышӑннӑ. Кун ҫиччен тӑшманӑн пӗр пин салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсенчен 6 танк тата ытти трофейсем те тытса илнӗ, 300 нимӗҫе ытла тыткӑна илнӗ.

* * *

Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика флочӗн карапӗсем Балтика тинӗсӗнче нимӗҫсен пӗтӗмӗшпе 14.000 тонна тиякан икӗ транспортне тата пӗр хурал карапне шыва путарнӑ.

* * *

Малтантарах пӗлтернӗ тӑрӑх, пирӗн ҫарсем Шнайдемюль хулинче хупӑрласа илнӗ тӑшман группировкине пӗтерсе тӑкнӑ чухне тӑшманӑн 5.000 салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ. Унсӑр пуҫне, совет чаҫӗсем Шнайдемюль хулинчен ҫурҫӗртерехри вӑрмансенче нимӗҫсен икӗ группировкине пӗтерсе тӑкнӑ, тыткӑна нумай илнӗ. Ҫав шутра ҫаксем тыткӑна лекнӗ: Шнайдемюль хулин комендантӗ полковник Генрих Ремлингер тата унӑн штабӗн начальникӗ Карл фон-Хазе, Шнайдемюль гарнизонӗн инженери службин начальникӗ полковник Альфред Курхаул тата ытти нимӗҫ офицерӗсем те. Тыткӑна лекнӗ Генрих Ремлингер полковник ҫапла каласа кӑтартнӑ: «Январӗн 27-мӗшӗнче эпӗ Дойч-Кроне хулине Гиммлер штабне ситрӗм. Гиммлер нимӗҫ ҫарӗсен «Висла» ятлӑ ушкӑнӗн командующийӗ пулса тӑрать. Мана Шнайдемюль комендантне лартни ҫинчен пӗлтерсе, Гиммлер ҫапла каларӗ: «Сире вӗҫӗмсӗр пысӑк правасем паратпӑр. Ҫав правасемпе усӑ курса, сирӗн темӗнле пысӑк сухатусем тӳсме лексен те, крепоҫа аллӑран ямалла мар». Ҫакӑн [illegible] ҫӑн чаҫах вырӑссем хулана хупӑрласа илчӗҫ. Темиҫе кун хушшинчи ҫапӑҫусенче пирӗн 4.000 салтакпа офицер ытла вилсе пӗтрӗҫ. Хуларе ҫав тери хӑраса ӳкнипе пӑтрашу пусланса кайрӗ те пӗтӗм йӗрке пӗтсе ларчӗ. Офицерсем нумайӗшӗ—хула гарнизонне вырӑссем пӗтерсе лартаҫҫӗ, ҫавӑнпа парӑнас пулать, терӗҫ. Эпӗ радио тӑрӑх штабпа ҫыхӑнтӑм та гарнизон пурнӑҫӗ шанчӑксӑрри ҫинчен пӗлтертӗм. Мана Гиммлер ҫапла ответ пачӗ: «Сирӗн лару-тӑрӑвӑр ҫинчен эпир пӗлетпӗр. Тытӑнса тӑрӑр. Сирӗн пата пулӑшу пырать». Анчах та эпӗ нимӗнле пулӑшу та кӗтсе илеймерӗм, вара мӗнпур ответлӑха хам ҫине илсе, Шнайдемюль хулинчен ҫурҫӗр еннелле тапса тухма шут тытрӑм. Анчах та пирӗн хула хыҫне вырӑссем тӳрех лартрӗҫ. Вӗсем пире ҫав тери пысӑк сухату тӳстерчӗҫ, эпир сапаланса кайрӑмӑр. Мана тата ман штабӑн начальникне тыткӑна илчӗҫ».

Тыткӑна лекнӗ Альфред Курхаул полковник ҫапла каласа панӑ: «Шнайдемюль хуранӗнче нумай пин нимӗҫ пӗтрӗ. Хупӑрласа илнӗ ункӑран пӗр подразделени те, темле пӗчӗк подразделени пулин те, ҫӑлӑнса тухаймарӗ. Хуларан тапса тухнӑ ушкӑнсене вырӑссем тепӗр хут вӑрмансенче хупӑрласа илнӗ те пайӑн-пайӑн пӗтерсе тӑкнӑ. Вӑрманти ҫулсемпе ял ҫулӗсем ҫинче нимӗҫ салтакӗсен виллисем пинӗ-пинӗпе выртнине хамах куртӑм. Ҫав ҫулсем ҫинче пӑрахса хӑварнӑ танксем, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен тупӑсем тата ҫӗмӗрсе тӑкнӑ автомашинӑсем темӗн чухлех тӑрса юлчӗҫ. Тыткӑна лексен, эпӗ Шнайдемюль гарнизонӗнчи офицерсене нумай тӗл пултӑм. Вӗсем пӗр-пӗринчен уйрӑлса пӗтнӗ салтаксен ушкӑнӗсемпе пӗрле тыткӑна парӑннӑ».

А. Н. ТОЛСТОЯ ПЫТАРНИ

Февралӗн 26-мӗшӗнче Мускав Алексей Николаевич Толстоя пытарнӑ.

Толстой ӳчӗн кӗлне хунӑ урнӑна Союзсен Ҫурчӗн Пӗчӗк залне лартнӑ.

Ирхине 11 сехетрен пуҫласа столицӑри ӗҫҫынисем, ученӑйсем, писательсем, артистсем, Мускаври предприятисен рабочийӗсем, Хӗрлӗ Ҫарӗн боецӗсемпе офицерӗсем, Союзсен Ҫуртне пырса, урна ҫумӗпе иртнӗ.

Партипе совет организацийӗсен тата Мускаври фабрикӗсемпе заводсен представителӗсем, литература, наука тата искусство деятелӗсем, пӗр-пӗрине улшӑнса, хисеплӗ хурал тӑнӑ.

Союзсен Ҫурчӗн Пӗчӗк залӗнче СССР Ют ҫӗршыв Ӗҫӗсен Халӑх Комиссариачӗн ответлӑ работникӗсем, дипломатиллӗ корпус членӗсем пулнӑ.

Пӗр сехет те 45 минутра зала ҫынсем кӗртме чарӑннӑ. Залра писателе пытарма организациленӗ правительство комиссийӗн членӗсем, писательсем, Толстойӑн тусӗсемпе тӑванӗсем юлнӑ. Хисеплӗ хуралта юлашкинчен Н. М. Шверник, А. Я. Вышинский, Г. М. Попов, А. Ф. Горкин, Н. С. Тихонов, Л. М. Леонов, М. А. Шолохов, И. И. Мещанинов академик тӑнӑ.

Икӗ сехет те 15 минутра писателе пытарма организациленӗ комисси членӗсем тата Шверник, Вышинский, Мещанинов юлташсем урнӑна Союзсен Ҫуртӗнчен илсе тухнӑ. Урнӑна хисеплӗ ҫар хуралӗ тӑнӑ. Писателе пытарма тухӑннӑ халӑх Ново-Девичи масар патнелле кайнӑ, оркестр хурлӑхлӑ марш каланӑ.

Масар ҫинче хурлӑхлӑ митинга Г. М. Попов юлташ уҫнӑ. Вӑл СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗн ячӗпе калама сӑмах Н. М. Шверник юлташа панӑ.

— Юлташсем, пирӗн ҫӗршыв пысӑк ҫухату тӳсрӗ,—тенӗ Н. М. Шверник,—вырӑссен питӗ чаплӑ писателӗ, талантлӑ сӑмах мастерӗ, социализмлӑ Тӑван ҫӗршывӑн сумлӑ патриочӗ Алексей Николаевич Толстой вилчӗ.

Ҫак аслӑ ҫын, тӗрлӗ ӗҫ ӗҫлесе пурӑннӑскер, пирӗнтен ӗмӗрлӗхе уйӑрӑлчӗ. Вӑл государствӑпа обществӑн пысӑк ӗҫӗсене туса пурӑннӑ. Алексей Николаевич Толстой—академик, Совет Писателӗсен Союзӗн Президиумӗн членӗ, СССР Верховнӑй Совечӗн депутачӗ, Мӗнпур Славянсен Комитечӗн Президиумӗн членӗ, нимӗҫ захватчикӗсен тата вӗсемпе пӗр мӑнаҫлисен тискер ӗҫӗсене тӗпчесе палӑртма тунӑ Чрезвычайнӑй Государственнӑй Комиссин членӗ пулса ӗҫленӗ. Вӑл пур ӗҫ валли те вӑй та, вӑхӑт та тупнӑ.

Толстой халӑхпа, хӑйне суйланӑ ҫынсемпе питӗ таччӑн ҫыхӑнса тӑнӑ. СССР Верховнӑй Совет депутачӗ пулса тӑрса, вӑл хӑйӗнчен мӗн ҫинчен те пулсан ыйтса ҫырнӑ ҫырусене тимлӗн пӑхса тухнӑ, ҫав ыйтусене часрах татса пама пулӑшнӑ.

Алексей Николаевич Толстой халӑх телейӗшӗн, хамӑр Тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн хӗрӳллӗн кӗрешнӗ. Тӑван ҫӗршыва хӑй мӗн тери хытӑ юратнине вӑл пурте ӑнланмалла, пурне те хумхантаракан сӑмахсемпе каласа панӑ. Вӑл ҫапла каланӑ: «Пурнӑҫра санӑн, Тӑван ҫӗршыв, юратнинчен хӗрӳллӗрех, вӑйлӑрах тата тасарах туйӑм урӑх ҫук!»

Совет ҫӗршывне юратса, вӑл унӑн тӑшманӗсене—нимӗҫсене—питӗ курайман, вӑл ҫавӑн ҫинчен калама чарӑнман.

Стечественнӑй вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче Алексей Николаевич хӑйӗн пӗтӗм талантне нимӗҫ нацизмне хирӗҫ кӗрешнӗ ҫӗре панӑ. Вӑл нимӗҫ захватчикӗсен юнлӑ преступленийӗсене пӗр шеллемесӗр тӑрӑ шыв ҫине кӑларса пынӑ, пӗр айӑпсӑр ҫынсене вӗлерекен нимӗҫсене, культурӑпа цивилизацие пӑсакан нимӗҫсене кураймасӑр пурӗнмӗ пӗтӗм халӑха сӗкленӗ.

Вырӑссен питӗ чаплӑ писательне, совет ҫӗршывӗн сумлӑ патриотне Алексей Николаевич Толстоя пирӗн халӑх нихӑҫан та манмӗ.

Алексей Николаевич Толстой ӗмӗр асра тытар!

Совет Писателӗсен Союзӗ ячӗпе сӑмах Н. С. Тихонов тухса каланӑ. Ун хыҫҫӑн писатель-академик Михаил Шолохов каланӑ. Искусство работникӗсен ячӗпе—РСФСР-ӑн тава тивӗҫлӗ артисчӗ К. А. Зубов каланӑ.

Хурлӑхлӑ митинг пӗтнӗ. А. Н. Толстойӑн кӗлне хунӑ урнӑна шӑтӑка антарнӑ. Виҫӗ хутчен юлашки салют панӑ. Хурлӑхлӑ кӗвӗ выранне оркестр, саванӑҫлӑ кӗвӗ, писательӗн хӑйӗн пӗтӗм пурнӑҫне панӑ аслӑ ӗҫ ӗмӗрлӗхе пырассине ҫирӗплетсе, паракан кӗвӗ—Совет Союзӗн гимнне калана.

Республикӑри колхозсемпе совхозсенче тислӗке тата вырӑнти ытти удобренисене сыхласа усрассине тата вӗсемпе усӑ курассине лайӑхлатмалли мерӑсем ҫинчен

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ йышӑннӑ постановлени

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн бюровӗ ҫакна палӑртаҫҫӗ: республикӑри нумай колхозсемпе районсем тислӗкпе тата вырӑнти ытти удобренисемпе усӑ курса, ҫулленех ялхуҫалӑх культурисем нумай туса илеҫҫӗ. Ҫав районсенчи колхозсем хӗллехи вӑхӑтра вырӑнти удобренисем хатӗрлесе хире кӑлараҫҫӗ. Нумай районсем вырӑнти удобренисем пухмалли уйӑхлӑхра удобренисем хатӗрлесе хире кӑларас тӗлӗшпе пысӑк ӗҫ тунӑ, вӗсем хӑйсене панӑ заданисене чылай ирттерсе тултарнӑ, вӗсен хӗллехи плана тултарасси те нумай юлман ӗнтӗ. Ҫапла, хӗлле тислӗк кӑлармалли плана февралӗн 10-мӗшӗ тӗлне Октябрьски район—93,8 процент, Чурачӑк районӗ—82,5 процент, Вӑрмар районӗ—78,8 процент, Муркаш районӗ—77,4 процент тултарнӑ. Ҫав районсенчи колхозсенче кӗл, кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ тата ытти удобренисем пухас ӗҫе те начар мар организациленӗ. Ҫав вӑхӑтрах Шӑмӑршӑ, Куславкино, Пӑрачкав, Чкаловски, Комсомольски. Улатӑр районӗсенчи тата хӑшпӗр ытти районсенчи чылай колхозсенче киревсӗр хӑтланаҫҫӗ, унта пухӑнакан тислӗке, кӗле тата вырӑнти ытти удобренисене хире кӑлармаҫҫӗ, вӑл удобренисем вара ҫулленех сая каяҫҫӗ. Ҫав районсен ҫӗрӗҫ, совет тата парти органӗсем колхозсемпе совхозсене, колхозниксемпе совхоз работникӗсене ялхуҫалӑх культурисен тухӑҫлӑхне ӳстерме ҫав тери кирлӗ удобренисемпе вилӑн усӑ курма мобилизацилемеҫҫӗ. Колхозсемпе совхозсем, хӗллехи вӑхӑтра вӗсен пуш тӑракан ҫынисемпе туртӑм вӑйӗ пулать пулин те, тислӗке йышлӑн хире кӑларас тата вырӑнти ытти удобренисем пухса хире турттарас ӗҫре ҫав хӗллехи вӑхӑтпа усӑ курмаҫҫӗ. Тислӗк пухса хире кӑларас ӗҫе халичченте вылӑх-чӗрлӗх фермисен работникӗсене хутшӑнтармаҫ, ҫав ӗҫре майракаллӑ шултӑра вылӑхпа сахал усӑ кураҫҫӗ. Ҫакӑн пирки темиҫе районра уйӑхлӑх вӑхӑтӗнче хире удобренисем кӑлармалли заданисене пурнӑҫа кӗртмен тата тислӗк кӑлармалли хӗллехи плане пурнӑҫа кӗртмесӗр хӑварас хӑрушлӑх умне пырса тӑнӑ. Ҫав плана Пӑрачкав районӗ—38,7 процент, Улатӑр районӗ—39 процент, Куславкино районӗ—35,2 процент ҫеҫ тултарнӑ. Нумай районсен руководителӗсем торфа ҫителӗклӗ хакламаҫҫӗ, ӑна пухса хире тӑкмалли плана пурнӑҫа кӗртмеҫҫӗ. Нумай колхозсен тата районсенчи ҫӗрӗҫ, совет, парти органӗсен руководителӗсем тислӗке кирлӗ пек сыхласа усрас тата унпа тӗрӗс усӑ курас ыйту ҫине ситеклӗ савӑрӑнса пӑхмаҫҫӗ. Чылай колхозсемпе совхозсенче тислӗк усрамалли хатӗрсем туман, пухӑнакан тислӗке вылӑх витисем тавра пӗр йӗркесӗр тӑкаҫҫӗ, унта вара тислӗк пӑсӑлать, хӑйӗн хакне ҫухататъ.

Ялхуҫалӑхӗнче тислӗке тата вырӑнти ытти удобренисене сая янине пула, вӗсемпе кирлӗ пек усӑ курманнине пула, колхозсемпе совхозсем тата промышленность предприятийӗсен подсобнӑй хуҫалӑхӗсем ҫулленех пахча-ҫимӗҫ, ҫӗрулми, тӗштырӑ тата техникӑллӑ культурӑсем нумай сахалтарах туса илеҫҫӗ.

Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ, тислӗкпе тата вырӑнти ытти удобренисемпе усӑ курас ӗҫ ҫине ҫавӑн пек пӑхнине тӗрӗс мар тата хуҫасӑрла пӑхни тесе шутласа, вӑл тӗштырӑн, пахча-ҫимӗҫӗн, ҫӗрулмин тата ялхуҫалӑхӗнчи ытти культурӑсен тухӑҫлӑхне ӳстерес ӗҫе вӑйлӑ сиенленине шута илсе, райҫӗрӗҫ пайӗсене, райисполкомсене тата ВКП(б) райкомӗсене тислӗкпе ытти удобренисене сая янине пӗтерсе лартма, ҫавӑн пекех тата ҫав удобренисене пур колхозсенче те лайӑх усрассине, вӗсемпе тӗрӗс усӑ курасси ҫине тимлӗрех савӑрӑнса пӑхма хушаҫҫӗ.

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ тата ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ ҫапла йышӑнаҫҫӗ:

1. Районсенчи ҫӗрӗҫ пайӗсене, райсоветсен исполкомӗсене тата ВКП(б) райкомӗсене тислӗке тата вырӑнти ытти удобренисене пухас, усрас тата вӗсемпе усӑ курас ӗҫри ситменлӗхсене пӗтерме хушас, «Колхозсенче вырӑнти удобренисем пухмалли тата вӗсемпе усӑ курмалли мерӑсем ҫинчен» Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗ 1944 ҫулхи ноябрӗн 16-мӗшӗнче йышӑннӑ постановление ҫине тӑрсах пурнӑҫа кӗртме хушас.

2. Ҫӗрӗҫ, совет тата парти органӗсене хӗллехи вӑхӑтра тислӗкпе ытти удобренисене май килнӗ таран ытларах пухса хире кӑларма хушас, тислӗкпе тата вырӑнти ытти удобренисемпе 1945 ҫулта усӑ курмалли государство планне кирек мӗн пулсан та пӗтӗмпех тата ирттерсе тултарма хушас.

3. Районсене, ҫак постановлени ҫумне 1-мӗш хушса хунипе кӑтартнӑ тӑрӑх, тислӗкпе ытти удобренисене хире кӑларас тӗлӗшпе вунӑкунлӑх заданисем парас, ҫавӑн пекех тата, 2-мӗш хушса хунипе кӑтартнӑ тӑрӑх, удобренисем турттармашкӑн туртӑм вӑйӗ уйӑрса хума заданисем парас.

Райисполкомсемпе ВКП(б) райкомӗсене тислӗкпе ытти удобренисем кӑларас тӗлӗшпе колхозсене вунӑкунлӑх заданисем пама, ҫавӑн пекех тата кашни колхозрах ҫав ӗҫе тума мӗн чухлӗ туртӑм вӑйӗ уйӑрса хумаллине кӑтартса пама хушас.

4. Ҫӗрӗҫ органӗсемпе райисполкомсене кашни колхозрах тислӗкпе торф кӑларас ӗҫе тата кӗлпе кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухас ӗҫе организацилемешкӗн ответлӑ ҫынсем уйӑрса хума хушас.

5. Республикӑри тата районри хаҫатсен редакторӗсене хире тислӗк кӑларас ӗҫ мӗнле пыни ҫинчен хаҫатсенче цифрӑсем пичетлеме тата ҫав ӗҫре малта пыракансемпе кая юлаканнисене (районсемпе колхозсене) кӑтартма хушас.

6. Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариатне тата районсенчи ҫӗрӗҫ органӗсене тислӗкпе ытти удобренисене хире кӑларас-сине, тӗплӗ усрассине тата вӗсемпе тӗрӗс усӑ курассине организацилес ӗҫе райҫӗрӗҫ пайӗсемпе МТС-сен тата ытти организацисен агрономӗсене хутшӑнтарма хушас. Кашни колхоз правленийӗн, агрономсемпе пӗрле, вырӑнти удобренисемпе усӑ курмалли плана (мӗнле удобрение мӗнле хире тата мӗнле культура валли кӑлармаллине кӑтартса) сырса хатӗрлемелле, удобренисене вара хире ҫав план тӑрӑх кӑлармалла.

7. Колхозсемпе совхозсенче пухӑнакан мӗнпур тислӗке сыхласа усрамашкӑн районри совет тата парти органӗсен руководителӗсене колхозсемпе совхозсенче кашни вылӑх картишӗпе вылӑх вити патӗнче тислӗкпе вылӑх шӗвекӗ усрамалли вырӑнсем тутарттарма хушас, ҫав хатӗрсене колхозсемпе совхозсен вӑйӗпе тата вырӑнти строительство материалӗсемпе усӑ курса тумалла.

8. Райсоветсен исполкомӗсемпе ВКП(б) райкомӗсене, тислӗк пухас тата унпа усӑ курас ӗҫе лайӑхлатнипе пӗрлех, торф кӑларса турттармалли тата кӗлпе кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухмалли плана пӗтӗмпех тата ирттерсе тултармашкӑн пур кирлӗ мерӑсене те йышӑнма хушас. Хире торфпа, фекалипе тата ҫавӑн йышши ытти удобренисемпе ҫӗнетмешкӗн колхозсемпе совхозсенче торфпа тислӗк, торфпа фекали тата ытти удобренисен компосчӗсене хатӗрлеме хушас.

9. Тислӗк ытларах пухӑнтӑр тесе колхозсенче обязательнӑй йӗркепе вылӑх айне улӑм сармалла тӑвас. Райҫӗрӗҫ пайӗсене тата райисполкомсене хӑйсен хуҫалӑхӗсенче тислӗк пухса ӑна колхоз хире кӑларакан колхозниксене хавхалантарас шутпа Чӑваш АССР Совнаркомӗпе ВКП(б) Обкомӗн 1944 ҫулхи ноябрӗн 16-мӗшӗнчи постановленийӗ тӑрӑх памалли премисене панине тӗрӗслесе тӑма хушас.

10. Хӑш колхозсен хирӗсем йӳҫӗхсе тӑракан кӗллӗ тӑпраллӑ, ҫавсене, вӗсен известь пулсан, хӗлле хире известь кӑларма сӗнес.

Промышленность предприятийӗсен подсобнӑй хуҫалӑхӗсен директорӗсене хӑйсен участокӗсене тислӗк кӑларас ӗҫе организацилеме, кӗл хатӗрлеме тата вырӑнти ытти удобренисемпе усӑ курма хушас.

Чӑваш АССР Совнаркомӗн Председателӗ А. МАТВЕЕВ.


ВКП(б) Обкомӗн Секретарӗ И. ЧАРЫКОВ.

„Пулӑшу“ промартельте

ЙЕПРЕҪ. Инвалидсен «Пулӑшу» ятлӑ промартелӗ иртнӗ уйӑхри производство планне 128,6 процент тултарса, промысла кооперации артелӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗнче мала тухрӗ. Ҫавӑншӑн артеле Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне тата укҫан премине пачӗҫ. Артель коллективӗн ӗҫне Чӑваш АССР правительстви тивӗҫлипе хакланин аласта сене татах та тимлӗнрех ӗҫлеме хавхалантарчӗ. Артель коллективӗ февраль уйӑхӗнче те пысӑк ҫӗкленӳпе ӗҫлет. Ҫӗвӗ ҫӗлекен цехри стахановкӑсем Р. Медведева, В. Салимова, Н. Штурманова юлташсем нормӑна 2 хут ытла ирттерсе тултараҫҫӗ. Цех заведующийӗ Р. Питуш юлташ ҫӗвӗҫсен ӗҫне лайӑх йӗркелесе, ертсе пырать.

Атӑ-пушмак юсакан Б. Барсуков, катанпичке тӑвакан И. Глякин та нормӑна 2 хут тухӑҫлӑрах ӗҫлеҫҫӗ. Чӑваш АССР Совнаркомӗ артеле Хӗрлӗ Ялав тата премипе пани ҫине ответлесе, вӗсем нормӑна 250 процент тултарса пыма обязательство илчӗҫ.

П. КУРАКОВ



Ӳкерчĕк çинче: Красноармейски районри «Шăмар» колхоз председателĕ Е. П. Крылов юлташ. Вăл ертсе пыракан колхоз, иртнĕ ялхуçалăх çулне ăнăçлă вĕçлесе, вăйлă тырпул туса илнĕ. Кăçалхи çуракине те хатĕрленсе çитнĕ.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Никама та мухтамалли çук пулсан,...

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Чапаев ячĕпе тăракан колхозра вылăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма кирлĕ пек хатĕрленмен, витесене ăшă тытмалла туман. Витесене шăтăк-çурăксенчен юр вĕçтерсе кĕрет. Çамрăк вылăхсем валли те ăшă витесем çук. Çавна пула, колхозри сысна ферминче юлашки вăхăтра 27 сысна çури шăнса вилнĕ. Ферма заведующийĕ И. Белов ответлăха туйса ĕçлемест. Вăл тăрăшман пирки ферма витисене хĕле хатĕрлемен.

Колхоз 1944 çулта вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне тултараймарĕ. Сурăхсем 7 пуç, ĕнесем 3 пуç çитмеççĕ. Чăх-чĕп фермине вара 270 вырăнне 89 чăх çеç хăварнă. 1945 çулта 65 чăх сухалнă. Белов юлташ чăхсем вилнĕ пуль тесе ответлет, анчах вилни çинчен пĕр акт та çырман.

Фермăсенче учет ĕçне тивĕçлипе йĕркелеменнине пула, вылăхсен продуктивноçне тĕрĕс пĕлме çук. 1944 çулта ĕнесен фермине кашни ĕнерен 550-шар литр çеç сĕт суса илнĕ. Чăх-чĕп фермине кашни чăх 10-шар çăмарта кăна тунă. Çавна пула колхоз 1944 çулта государствăна аш-какай, сĕт-çу, çăмарта тырăпа сутăн илсе панă. Çав ĕç валли 500 пăт ыраш расходланă. Çапах та государство умĕнчи обязательствăсене колхоз пĕтĕмĕшпех пурнăçлайман. 34 килограмм çăм парса татман. Сĕт-çу, аш-какай, çăмарта тĕлĕшпе те колхоз 1944 çулшăн государство умĕнче парăмлă.

Апла пулин те, ВКП(б) райкомĕпе райсовет исполкомĕ Чапаев ячĕпе тăракан колхоза вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе малта пыракан колхоз тесе шутлаççĕ. Çак колхоза 1944 çулта вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе лайăх ĕçленĕ тесе палăртнă.

Çапла вара районра никама та мухтамалли çук пулсан, начаррисем ыра пулать.

Район вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшне юлса пырать. 1944 çулта вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне тултарнă пĕр колхоз та çук. Майракаллă шултăра вылăхсемпе сурăхсем ĕрчетмелли плана «Совет», «Радио», «Красный Остров» колхозсем кăна тултарнă. Ытти колхозсенче вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç калама çук япăх. Сăмахран, «1-ое мая», «Дружба», «Победа» колхозсем 1944 çулта вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли государство планне 50 процент чухлĕ те тултарайман.

П. ТИХОНОВ

„Сеятель“ колхоза Чăваш АССР Совнаркомĕн Хĕрлĕ Ялавне панă

СОВЕТСКОЕ, январĕн 27-мĕшĕ. (Хамăрăн ятарласа кайнă корреспондентран). «Сеятель» колхоза Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илме ятпа колхозниксен чаплă пухăвĕ пулса иртрĕ.

Кăçхине 8 сехетре колхоз председателĕ Андреев юлташ пухăва уçăлни çинчен пĕлтерет. Президиум суйланă хыççăн пуху председателĕ ВКП(б) Обком секретарĕн вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе ĕçлекен заместительне Г. Мартынов юлташа сăмах парать.

Мартынов юлташ хăйĕн сăмахĕнче Чăваш АССР Совнаркомĕ «Сеятель» колхоза тухăçлă тырпул туса илнĕшĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялав памалла туни çинчен пĕлтерсе, колхозниксемпе колхозницăсене хаклă наградăна илнĕ ятпа саламларĕ, кăçал татах та тухăçлăрах тырпул туса илессишĕн малалла кĕрешме чĕнчĕ.

Колхоз председателĕ Андреев юлташ, Хĕрлĕ Ялава йышăнса, чĕркуçланса чуптурĕ те, колхозниксемпе колхозницăсен ячĕпе ответлă сăмах каларĕ.

— Колхозăн Сталинла уставне йышăннăранпа вунă çул иртрĕ ĕнтĕ,—терĕ вăл.—Çак вунă çул хушшинче пирĕн колхоз пĕрмаях аталанса пычĕ. Вăрçă çулĕсенче те эпир, йывăрлăхсене çĕнтерсе пырса, фронтпа çĕршыв умĕнчи хамăрăн тивĕçе чыслăн пурнăçа кĕртсе пытăмăр. Чăваш АССР Совнаркомĕн Хĕрлĕ Ялавне илни пире тулли кăмăлпа савăнтарать, малашне татах та лайăхрах ĕçлеме вăй-хăват парать. Кăçал эпир иртнĕ çулхинчен тухăçлăрах тырпул туса илсе, Хĕрлĕ Ялава хамăр алăрах хăвармалла тăватпăр.

Кун хыççăн колхозниксемпе колхозницăсене пысăк наградăна илнĕ ятпа, райсовет исполкомĕпе ВКП(б) райкомĕнчен райсовет исполкомĕн председателĕ Малинин юлташ саламларĕ.

Пухура колхоз бригадирĕ Маслов, ялти шкул директорĕ Миронова, колхозник Яковлев юлташсем тухса каларĕç. Вĕсем колхозăн çитĕнĕвĕсене палăртрĕç, çуракине меллĕ хатĕрленни çинчен каласа парĕç тата обязательствăсем илчĕç.

«Сеятель» колхоз пысăк мар, унта пĕтĕмпе 58 хуçалăх пĕрлешсе тăрать. Юлашки тăватă çул хушшинче колхоз, вăтам шутпа, кашни гектартан 15 центнертан кая мар тĕштырă туса илнĕ. Иртнĕ çулта вара вăл татах та тухăçлăрах тырпул туса илнĕ. Колхозра курăксем акса тăвас ĕçе çултан çулах вăйлатса пыраççĕ. Сăмахран, 1944 çулта колхоз 6 гектар çинчен 28 центнер клевер вăрлăхĕ пухса илнĕ.

Курăксем акса тăвассине сарса пыни вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ăнăçлăн тултарма май парать. Вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана колхоз иртнĕ çулта та ытлашшипех тултарнă.

Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене яланах вăхăтра тултарса пырать. Вăрçă çулĕсенче колхоз государствăна 8.760 пăт тырă, 3.760 пăт çĕрулми тата ытти çимĕçсем те нумай панă.

Колхозниксен пухăвĕ кăçал гектартан 100 пăтран кая мар тырпул туса илме обязательство йышăнчĕ.

Пуху хыççăн савăнăçлă вечер пулчĕ.

Сĕрпӳ районĕнчи Лĕпсер ял Советне 5 колхоз кĕрет. Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе вĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Ăмăртура пур енчен те «Красная Армия» колхоз малта пырать. Вăл çуракине пур енчен те хатĕрленсе çитнĕ.

Ӳкерчĕк çинче: «Красная Армия» колхоз председателĕ Сергей Семенович Семенов юлташ.

Колхоз правленийĕн отчечĕ мĕн кăтартрĕ

ШАХАСАН («Чăваш Коммуни» корр). Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхозра нумаях пулмасть колхозăн отчетлă пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху колхозăн 1944 çулхи ĕçĕсен итогне сӳтсе-явса, çитĕнӳсемпе çитменлĕхсене палăртрĕ.

Иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче колхозниксемпе колхозницăсем начар мар ĕçлерĕç. 862 гектар çинчи тĕштырăсемпе пăрçа йышши культурăсене ăнăçлăн пуçтарса кĕртнĕ. Колхозниксем, вăйлă тырпул туса илес тесе, çĕре сахал мар çемçетнĕ, тырпулсене çумкурăксенчен виç-тăватă хут тасатнă. Çапла вара кашни гектартан вăтам шутпа тулă 21 центнер, вика 13,5 центнер туса илнĕ. Уйрăм бригадăсем тырпул тухăçлăхне ӳстерессипе татах лайăхрах ĕçленĕ. Иккĕмĕш бригада (бригадирĕ Николаева юлташ) кашни гектартан тулă 23 центнер, ыраш 15,5 центнер туса илнĕ.

Колхозра пахча-çимĕçсене те начар мар туса илнĕ. Пахча-çимĕçсем тăвас тĕлĕшпе уйрăм бригада ĕçлет. Вăл бригадăна коммунист И. Мыльников юлташ ертсе пырать. Кашни гектартан купăста 165 центнер, кишĕр 244 центнер туса илнĕ. Колхозра сад ĕрчетес тĕлĕшпе те лайăх ĕçлеççĕ. Колхозниксем тăрăшса ĕçленине пула, 24 гектар сад ĕрчетнĕ. Унта тĕрлĕрен çырла йывăççисем тата улмуççисем 4.000 тĕпе яхăн пур. Иртнĕ çулта садран 53 пин, пахча-çимĕçсенчен 49 пин тенкĕ тупăш илнĕ.

Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене тырпул, аш-какай, сĕт-çу тата ыттисене те срокра парса татнă. 1945 çулшăн 128 центнер тырă тата çĕрулми, планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 333 центнер тырă панă. Аш-какай 1945—46 çулсемшĕн 80 центнер леçсе панă.

Колхозра халь çуракине хатĕрленес ĕç пырать. Вăрлăхсене сортласа çитернĕ, вырăнти удобренисем хатĕрлес тĕлĕшпе те чылай ĕçсем тунă. Анчах та колхозра çитменлĕхсем чылай-ха. Кӳлсе çӳремелли хатĕрсем: тилхепе, хăмăт, ĕнерчĕксем çителĕксĕр. Хăшпĕр бригадăсенче хатĕрлену ĕçĕсене тума тытăнман-ха.

Колхозри коммунистсемпе комсомолецсен колхозниксем хушшинче ĕçлессине лайăхлатмалла. Агротехникăна вĕренме кружок тумалла.

С. ШАДИН.

Хĕрлĕ Ялавлă „Аниш“ колхозра

Вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе 1944 çулта мала тухнăшăн Октябрьски районри «Аниш» колхоза çак кунсенче Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне пачĕç.

«Аниш» колхоз пур тĕрлĕ вылăхсем енĕпе те государство планне тултарнă. Уйрăмăнах кунта кайăк-кĕшĕк ĕрчетес ĕç аван пырать. Планпа 300 пуç кайăк-кĕшĕк пулмалла пулсан, вĕсен 330 пуç пур, вăл шутра 170 хур. Иртнĕ çул кашни хур амăшĕнчен вăтам шутпа 5 чĕпĕ çитĕнтернĕ.

Лашасене тата ĕçе вĕрентнĕ 8 вăкăра пăхма конюхсем çумне, ĕçленĕ вăхăтра ездовойсем çумне çирĕплетнĕ. Колхозра пурĕ 70 лаша, вĕсенчен 43-ĕшĕ ăçлашисем. Начартарах лашасене канма тăратнă, вĕсене мăнтăрлатас тесе, кашни кунах çĕрулми пĕçерсе çитереççĕ. Колхозра ырхан лашасем пит сахал. Лашасем валли апат-çимĕç çителĕклĕ. Кашни лаша пуçне 11,4 центнер утă, 12,5 центнер сĕткенлĕ апат (çĕрулми, силос, вылăх кăшманĕ), 7,1 центнер тĕштырă уйăрнă. Кашни мăйракаллă шултăра вылăх пуçне 4,2 центнер утă, 15,7 центнер сĕткенлĕ апат, 2,2 центнер тĕштырă уйăрнă. Кашни сысна пуçне 2 центнер çамрăкла çулнă клевер ути, 22,4 центнер сĕткенлĕ апат, 4,3 центнер тĕштырă уйăрса хунă. Колхозра шултăра апат (çуртырпипе ыраш уламĕ) çителĕклĕ. Кашни фермăна кирлĕ апат-çимĕçе хăйне уйăрса панă, ферма çывăхне турттарса хунă.

Колхоз çуракине хатĕрленсе çитнĕ. Вăрлăхсене çителĕклĕ таран уйăрса, тасатса хунă, пăрçана пĕтĕмпех алăпа суйланă. Машинăсемпе плугсене, утатвашĕсене пĕтĕмпех юсаса çитернĕ. Çураки вăхăтĕнче кирлĕ пулакан лашасемпе ĕçлекен вăкăрсене çитерме 200 центнер утă, 213 центнер тĕштырă никам тĕкĕнмелле мар фонда хывнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне колхозниксен пухăвĕнче Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ И. В. Троицкий юлташ панă. «Аниш» колхоз председателĕ Павлов юлташ, ялава илсе, çапла каланă:

— Çак пысăк наградă,—терĕ Павлов,—пире татах та лайăхрах ĕçлеме хушать. Вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес тата унăн продуктивноçне ӳстерес ĕçе эпир татах та ытларах лайăхлатма пултаратпăр. Çаксем вĕсем пурте çуракине лайăх хатĕрленсе кĕтсе илнинчен, ăна вăхăтра та ăнăçлăн иртернинчен, кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене лайăх пурнăçланинчен килеççĕ.

Пухури колхозниксем çуракине хатĕрлес тата ăна ăнăçлă иртерес тĕлĕшпе конкретлă мероприятисем палăртрĕç.

Çулталăкри отчетсене вăхăтра тумалла

ÇĔРПӲ. Колхозсенче çулталăкри отчетсем тăвасси—пысăк ĕç. Çакă вăл колхозри çитĕнӳсемпе çитменлĕхсене çутатса парать. Иртнĕ çулхи ноябрь уйăхĕнче колхоз счетоводĕсемпе çулталăкри отчетсене тăвасси çинчен канашлусем туса иртернĕччĕ. Нумай çул ĕçлекен пысăк опытлă счетоводсем çак канашлура хăйсен ĕçĕсемпе ытти счетоводсене паллаштарчĕç.

Анчах та районри колхозсенче çулталăкри отчетсем тăвасси çителĕксĕр пырать-ха. Паянхи кун тĕлне районри 76 колхозран 50 колхоз кăна çулталăкри отчетсене туса пĕтерсе, районри çĕрĕç пайне тăратнă. «Коминтерн», «Красный Герой», «Машинострой», «Красный Перекоп», «Коммунар», «Кульмет», «Звезда» тата «Красные Тиуши» колхозсенче халĕ те çулталăкри отчетсене тума тытăнман.

Çак кая юлса пыракан колхозсенчи счетоводсене çулталăкри отчетсене тума районри çĕрĕç пайĕ енчен те пулăшу пама кирлĕ.

А. ИВАНОВ.

Польшăна ирĕке кăларнă ятпа пулса иртнĕ митинг

Февралĕн 25-мĕшĕнче, Хĕрлĕ Çар 27 çул тултарнă май, СССР-ти Поляк патриочĕсен союзĕ тата Славянсен пĕтĕм союзри комитечĕ Польша çĕрне нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă ятпа митинг организациленĕ.

Союзсен Çурчĕн Колоннăллă залне Польшăпа Совет Союзĕн государство ялавĕсемпе илемлетнĕ. Митинга пынисем хушшинче—Польшăпа Совет Союзĕн обществăллă деятелĕсем, ученăйсем, писательсем, артистсем, Хĕрлĕ Çарпа Польша çарĕн офицерĕсемпе генералĕсем, Югослави, Чехословаки, Болгари общественноçĕн представителĕсем. Ложăсенче дипломатиллĕ корпус членĕсем пулнă.

Митинга мĕнпур Славянсен комитечĕн председателĕ А. Гундоров генерал-лейтенант уçнă.

Митингра çаксем тухса каланă: Польша республикин чрезвычайлă тата полномочнăй посолĕ З. Модзелевский господин, Польша çарĕн генерал-майорĕ Ю. Скоковский, Поляк патриочĕсен союзĕн генеральнăй секретарĕ А. Юшкевич, Францири поляксен Ирĕклĕх Комитечĕн председателĕ Томаш Пентка, Хĕрлĕ Çар генерал-лейтенанчĕ Василий Сергацков.

Митингра пулнисем, çав тери хавхаланса, нумай вăхăт хушши хĕрӳллĕн алă çупса, Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ И. В. Сталин патне ят çырнă çыру йышăннă. Митингра пулнисем çавăн пекех Хĕрлĕ Çар салтакĕсене, офицерĕсене тата генералĕсене ăшă салам янă.

Çавăн пекех тата çаксене саламсем янă: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен Президентне Ф. Рузвельта, Великобритани Премьер-Министрне У. Черчилле, Югослави Халăхĕн Ирĕклĕх Çарĕн Главнокомандующине Халăх геройне Иосип Броз Тито Маршала, Чехословаки республикин Президентне Э. Бенеш доктора, Польша Халăх Совечĕн Президентне Б. Берута тата Польша республикин Вăхăтлăх Правительствин Премьер-Министрне Осубка-Моравский господина.

Митингра пулнисем Польша халăхне тата Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи, Канадăри, Францири тата ытти çĕршывсенчи поляк эмигранчĕсене салам янă. (ТАСС).

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, февралĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ февралĕн 24-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Германире Рейн шывĕпе Маас шывĕ хушшинче союзниксен çарĕсем Мойланд хулине йышăннă, ытти чаçсем Гох хулипе Уден хули хушшинчи чугун çултан кăнтăртарахра малалла куçнă.

Союзниксен çарĕсем Рер шывĕ урлă каçас тĕлĕшпе çĕнĕрен наступлени пуçласа янă та Линних хули районĕнче Рурих, Глимбах, Гевених тата Бослар ялĕсене туртса илнĕ.

Прюм хулинчен кăнтăр-хĕвеланăç еннелле пĕр миля çурă малалла куçнă союзниксен чаçĕсем халăх пурăнакан чылай пунктсене йышăннă.

Союзниксен танковăй чаçĕсем Люксембурга Германи чиккинче Юкен хулипе Прейсшейд хулине йышăннă. Саар шывĕн хĕвелтухăç хĕрринче Саарбург хулинчен çурçĕртерехре ларакан Окфен хулинче тăшманпа урамсенче çапăçаççĕ. Саар шывĕн хĕвелтухăç хĕрринче Саарбург хулинчен кăнтăртарахра ларакан Серриг хулине тăшмантан пĕтĕмпе тенĕ пекех тасатса пĕтернĕ.

Союзниксен çарĕсем Форбах хулине тăшмантан тасатаççĕ.

Саар шывĕн хĕвеланăç хĕрринче союзниксен çарĕсем Шенбах хулине йышăннă.

Февралĕн 21-мĕшĕнче союзниксен çарĕсем хĕвеланăç фронтĕнче 2.700 нимĕçе тыткăна илнĕ.

Союзниксен авиацийĕ Кăнтăр-вăтаçĕрти тата Кăнтăр-хĕвелтухăç Германири транспорт объекчĕсене тапăннă. Февралĕн 24-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле йывăр бомбардировщиксем Рейн облаçĕнчи Пфорцхейм чугун çул центрĕпе промышленность центрне тапăннă. Çăмăл бомбардировщиксем Берлина тапăннă.

ЛОНДОН, февралĕн 24-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ февралĕн 24-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

Италире 5-мĕш арми чаçĕсем хăйсен Делла Торрачиа тата Кастелло ятлă çӳллĕ вырăнсенчи позицийĕсене çирĕплетнĕ, тăшман çав позицисене каялла туртса илесшĕн çапăçнă, унăн контратакисене сирсе янă. Фронтăн ытти участокĕсенчи лару-тăрура улшăнусем пулман.

Февралĕн 23-мĕшĕнче союзниксен Вăтаçĕр тинĕс авиацийĕ ĕнтĕ 11-мĕш кун умлăн-хыçлăн Германи çулйĕрĕсене çĕмĕрет, вăл Австрири тата Çурçĕр Италири чугун çулсен тавар станцийĕсене тапăнса тăрать.

ЛОНДОН, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Германире, Линнихран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, союзниксен çарĕсем темиçе ял тытса илнĕ. Юлих хулине (Германире) пĕтĕмĕшпех тăшмантан тасатнă союзниксен çарĕсем Штеттерних хули патне пырса тухнă. Германири Дюрен хулинчен çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем Оберцир тата Бирксдорф хулисене тасатнă.

Союзниксен истребитель-бомбардировщикĕсем Рейнпа Рур хушшинче нумай хуласенчи çирĕплетнĕ çуртсене тапăннă. Мюнхен-Гладбах, Эйскирхен тата Кельн хушшинчи виç кĕтеслĕхри района уйрăмах вăйлă тапăннă. Союзниксен çарĕсем Ваксейлер, Оберпиршейд, Рингхушейд тата Нейербург хулисене йышăннă. Нейербургран кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем Синспельт хулине йышăннă. Сюр шывĕн анатри юхăмĕнче союзниксен çарĕсем Окфен хулине йышăнса илнĕ. Тăшмана Серриг хулинчен хăваласа кăларнă.

Саарбрюккенран кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем тăшманăн виçĕ контратакине сирсе янă, тăшмана пысăк сухатусем кӳнĕ. Саар шывĕн хĕвелтухăç çыранĕнче ларакан Бубингена тăшмантан тасатнă, унтан хĕвелтухăçнерехре Блисларсбах хулине йышăннă.

Февралĕн 22-мĕшĕнче союзниксен çарĕсем хĕвеланăç фронтĕнче 2.330 çынна тыткăна илнĕ.

Йывăр бомбардировщиксен питех те пысăк соединенийĕсем, истребительсен хӳтĕлесе пынипе, Германин çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнчи чугун çул объекчĕсене, çавăн пекех тата Мисбургри, Гамбургри тата Гарбургри нефть юхтаракан заводсене, Каменри синтетически горючи заводне тата Гамбургпа Бременри подводнăй лодкăсен верфьне тапăннă.

Февралĕн 25-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле çăмăл бомбардировщиксем Берлина тапăннă.

ЛОНДОН, февралĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Италире фронтĕнче, Баньякаваллăран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре 8-мĕш армин чаçĕсем Сенио шывĕн хĕвелтухăç çыранĕнче тăшманăн хирĕç тăмалли темиçе узелне пĕтерсе тăкнă. 5-мĕш арми фронтĕн вăтам секторĕнче союзниксен çарĕсем тăшманăн çĕнĕ контратакисене сирсе янă. Тăшман унта союзниксен çарĕсене вĕсем нумай пулмасть йышăннă позицисенчен сирпĕтсе кăларасшăн пулнă.

Румынири ĕçсем пирки

БУХАРЕСТ, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 25-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Бухарестра дворецпа шалти ĕçсен министерстви çывăхĕнчи района жандармери хупăрласа илнĕ. Почта çуртĕ патне те çавăн пекех жандармсем нумай тăратнă.

«Скынтейя» «Ромыния» тата «Либертатя» хаçачĕсем провинцисенче пысăк демонстрацисем пулни çинчен пĕлтереççĕ. Демонстрацире пулнисем Радескуна халех вырăнтан тухма тата нациллĕ-демократиллĕ фронтăн правительствине туса хума ыйтнă. Тимишоари хулинче 30.000 çынлă демонстраци питĕ йĕркеллĕ иртнĕ. Сигишоара хулинче 3.500 çын провокаторсене арестлеме, çавăн пекех тата Радеску майлисемпе фашистсем майлисене арестлеме ыйтнă. Брашов хулинче нациллĕ-демократиллĕ фронтăн митингĕ пулса иртнĕ, митингра 35.000 çын пулнă. Легионерсен пĕр ушкăнĕ царанистсен «Авантул» хаçат редакцийĕн çуртĕнчен демонстрантсене пăшалсемпе пенĕ. Стоян рабочие вĕлернĕ. Редакци çуртĕнче свастикăллă гитлерла значоксем, гранатăсем, пистолетсем тата гитлеровецсемпе легионерсен пропагандистла материалĕсене тупнă. Февралĕн 24-мĕшĕнче Крайова хулинче 20.000 çынлă митинг пулса иртнĕ. Митингра пулнисем Радеску генерала кăларма, нациллĕ-демократиллĕ фронтăн правительствине туса хума, халăх суйланă Челак префекта вырăна лартма ыйтнă. Митинг хыççăн митингра пулнисем префектура патне пынă та, ăна хупăрласа илсе, çĕнĕ префекта вырăна лартма хушнă. Халăх префектура алăкне уçма хăтлансан, полици ун çине винтовкăсемпе тата пулеметсемпе пеме пуçланă. Çав вăхăтра вара пĕр рабочие амантнă. Префектура çуртне кĕрсе кайнă рабочисене префектурăра ĕçлекен фашистсем пеме пуçланă. Хаçат пĕлтернĕ тăрăх, хальхи вăхăтра префектура «халăх аллинче тăрать».

«ТАЙРИКУ СИМПО» ХАÇАТ ЯПОНИН ВĂРÇĂРИ ЛАРУ-ТĂРĂВĔ ÇИНЧЕН

ШАНХАЙ, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). «Тайрику Симпо» хаçат Японин вăрçăри лару-тăрăвĕ çивĕчленсе пынине палăртать. «Тăшман,—çырать хаçат,—Иводзима утравĕ çине анас шухăша пăрахман, февралĕн 17-мĕшĕнче десант антарма пуçланă. Крепость туса хунă çав утрав çинчи Япони гарнизонĕсем, паллах ĕнтĕ, вĕçне çитиччен хаяррăн çапăçĕç. Анчах та тăшман малалла куçма хăтланни, Японие хирĕç операцисем пуçласа ямашкăн опорнăй пунктсене йышăнса илме хăтланни, çавăн пекех тата тăшманăн оперативнăй вăйĕсем Японипе юнашар шывра хастарлăн кĕрешме чарăнманни—çаксем пурте вĕсем вăрçăри лару-тăру йывăрри çинчен, вăл лару-тăрăва çĕнтерме пире çăмăл мар пулни çинчен каласа параççĕ.

Лейте (Филиппин) утравĕ çинче вăрçă ĕçĕсем пуçласа янă хыççăн виçĕ уйăхранах тăшман Иводзима утравĕ çине анма хăтланни тата унăн оперативнăй вăйĕсем Японин çывăхĕнчех кĕрешни пирĕншĕн кĕтмен сĕртенех сиксе тухнă япала пулса тăчĕ. Апла пулсан, пирĕн çывăхри уйăхсенчех кĕтмен сĕртен çĕнĕ событисем пулма пултараççĕ. Çавăнпа та пирĕн, çăмăлттайла шухăшсене пĕтĕмпех пăрахса, кирек епле йывăрлăха та çĕнтерме хатĕр тăмалла».

ФРАНЦИ ФАШИСЧĔСЕН ПУÇЛĂХНЕ ДОРИОНА ВĔЛЕРНĔ

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлерла агентство — Германин информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх; Германин кăнтăр-хĕвеланăç пайне сывлăшран пырса тапăннă вăхăтра Жак Дориона вĕлернĕ.

Жак Дорио Франци фашисчĕсен хăйне хăй «Франци халăхĕн партийĕ» тесе ят панă бандин пуçлăхĕ тата Гитлерăн чи шанчăклă хӳрешки пулнă. Союзниксен çарĕсем Францие пырса кĕрсен, Дорио Францири ытти квислингсемпе пĕрле Германие тарнă пулнă.

Отв. редактор заместителĕ
А. А. ЭСХЕЛЬ.

Шупашкарти электромеханика техникумĕ 1-мĕшпе 3-мĕш курссене вĕренме илет. 1-мĕш курса вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисене, 3-мĕш курса—вăтам шкулăн 10-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисене илеççĕ.

Техникум çак специальноçсене вĕрентет: 1) электричество аппарачĕсем тăвасси, 2) метала касса ĕçлесси.

Вĕренекенсене общежитие вырнаçтараççĕ, стипенди параççĕ, столовăйра апатлантараççĕ.

Заявленисене мартăн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Адрес: гор. Чебоксары, ул. Карла Маркса, 82. Электромеханический техникум.

Аслă халăхăн писателĕ

«Художник хăйĕн искусствипе пĕрле ӳсет. Унăн искусстви вăл сăнласа паракан халăхпа пĕрле ӳсет». Çапла каланă Алексей Николаевич Толстой писатель ĕçĕ çинчен. Çак сăмахсем вĕсем чи малтан ăна хăйне тивеççĕ.

Сăмах çине вăл çав тери тарăннăн та анлăн пăхнă, чи тĕрĕс те чи илемлĕ сăмахсене суйласа илме пĕлнĕ, халăхăн тĕрлĕ вăхăтсенчи пурнăçне çав тери аван ӳкерсе пама пултарнă, историллĕ характерсене пĕр шикленмесĕр сăнласа пама пĕлнĕ. Алексей Николаевич пĕрмаях çĕнĕ япаласем шухăшласа кăларма пултарнипе тата хавхалантаракан сăмах вăйĕпе тĕлентернĕ.

Петр вăхăтĕнчи авалхи çынсене сăнласа парас ĕçре мĕн каламаллине пĕтĕмпех каласа пĕтернĕ пек туйăнатчĕ. Анчах «I-мĕш Петр» романăн юлашки сыпăкĕсене илсе пăхăр-ха, вăл кĕнекере е ăшă чеелĕх, е вăрçă пейзажĕн хăюллă хастарлăхĕ, е килти пурнăçăн тискер драматизмĕн çĕнĕ вăйĕ тепĕр хут тĕлентерет. Çĕнĕрен сăнласа панă çав характерсенче мастер ирĕкĕ, çав тери ăста каласа пама пĕлекен, канма пĕлмен çамрăклăх ирĕке палăрать. Хăй йывăр чирленĕ вăхăтра та, чирлĕ ӳчĕн çав тери йывăр асапне хавхаланупа çĕнтерсе, ирĕклĕ искусствăн хăюллă художник валли çеç уçăлакан анлă хирне тухнă пек туйăнатчĕ. Романăн кашни çĕнĕ сыпăкĕ çĕнĕ майсем пуррине, вăйлăрах çырса кăтартма пуррине палăртакан япала пек туйăнатчĕ. Унăн сăнлакан сăмахĕсем тексемленмесчĕç, йăлтах урăхла, тахçан авал иртсе кайнă тапхăра кăтартса пама вăл çĕнĕрен çĕнĕ майсем шыраса тупатчĕ. Çав авалхи çынсен савăçĕпе хуйхи темиçе миллион совет çынни чĕрине кĕрсе ларатчĕç.

Хăшпĕр критиксем—писатель историри çынсемпе хăйне епле кирлĕ çапла усă курать, тесе калатчĕç. Анчах та вăл хăйне кирлĕ пек хăтланни—пуласлăх патне туртăннинчен. Толстой ялан çĕнĕ те çĕнĕ япала шыраннинчен килнĕ. Хăйĕн таланчĕн чуппине чарса лартнă пулсан, хăйĕн тимлĕхне мăкатнă пулсан, пулса иртекен ĕçсене яланхи пекех ăнлантарса парас çул çине тăнă пулсан—вăл çав самантра хăйĕн аслă ĕмĕрне тивĕçлĕ шыракан писатель пулма пăрахнă пулĕччĕ, ăна тунсăх пулнă пулĕччĕ.

«Хамăн шухăша куççульпе çăвăп»,—тенĕ Пушкин. Пушкинăн çав чăнлăхне Алексей Николаевич çынна сăнласа парас чăнлăхăн чи çӳллĕ пусăмĕ вырăнне хурса шутланă. Унăн политикăллă шухăшĕ кăçта драмăллă пĕтĕм пурнăçран çуралса тухнă. Ахальтен мар ĕнтĕ «I-мĕш Петр» романа вăл совет государстви фашизмăн хура вăйĕсене хирĕç тăтăклăн кĕрешнĕ вăхăтра çырнă. Полтава кунĕсене ĕлĕкхи çынсем «Россия пĕрĕлнĕ кун» тесе шутланă пулсан, вăл халь тата пысăкрах событие—хăйĕн юратнă çĕршывĕ, аслă совет çĕршывĕ, пĕтĕм тĕнчерен çӳлерех хăпарса ĕмĕрлĕхе пыракан чăнлăх çутинче çуталса тăнине курчĕ.

Пĕр-пĕр тапхăрти пĕчĕк геройсен сăнĕсене хăюллăн кăтартса панипе пĕрлех вăл хăйĕн тĕрĕс аллипе чи паллă, чи ответлă, чи çутă сăнлăхсене те питĕ ăста çырса кăтартнă. Хăйĕн произведенийĕсенче вăл чи малтан тенĕ пек Ленинпа Сталинăн сăнĕсене, аслă совет халăхĕн аслă çулпуçĕсен сăнĕсене кăтартса панă. Вăл кĕрешӳре çĕнтерӳшĕн çуралнă. Пысăк йывăрлăхсене тӳссе ирттерсе çутталла каякан халăхăн, социализм стройĕ текен йĕркене çирĕплетес тĕлĕшпе çухатусем пулассинчен хăраман халăхăн пурнăçне туйса тăнă. Вăл хальхи вăхăтăн аслă сывлăшĕпе сывланă, унăн пысăк ĕçĕсемпе, темпераменчĕпе пурăннă.

Ку çаплах пулмалла пулнă та. Хăшпĕр художниксем кăшт кăна тĕкĕнсе илекен ыйтусем, нумайĕшĕ татса пама вăй çитерме пултарайман ыйтусем уншăн пит çăмăл туйăннă. Вăл эпопея калăпăшĕпе шухăшланă, хăйĕн геройĕсене вăл тĕрлĕ тĕспе сăрласа йышлăн кăларса тăратнă, вĕсемпе вăл киленсе тăнă, пурнăç пуянлăхĕпе савăннă.

Унăн ыра талант пулнă. Çынсене вăл иккĕлентерсе асаплантарман, вĕсене психологиллĕ тĕпсĕрлĕх хĕррине илсе пыман, хăйсен шанчăкĕсене çухаттарман. Унăн талантĕ савăнăçлă талант, этемлĕхе тулли шанса тăракан талант пулнă. Иртнĕ вăхăтри чи тискер картинăсенчен вăл, тăван халăхăн чаплă пуласлăхне шанса, пуçа çӳле çĕклесе иртсе кайнă. Çавăн пирки те Петр вăхăтĕнчи хăрушă та тискер тапхăр тĕттĕм те сивĕ туйăнмасть, вăл—пурнăç нихăçан курман пек çеçкеленсе каяссине палăртса тăрать. Çавăнпа та граждан вăрçине кăтартакан унăн эпопейинче йĕркесĕр пăтрашăну мар курăнать, унта çав хăюллă вăях курăнать, унта Октябрь çыннисене пĕтĕм тĕнчери историллĕ çĕнтерӳсем патне илсе пынă вăй, этемлĕхĕн чи тискер тăшманне хирĕç пĕр-пĕччен çапăçса гитлеризма çĕнтернĕ ăрусене вĕрентсе ӳстернĕ вăй палăрса тăрать.

Унăн аслă таланчĕ сарăлса çитнĕ вăхăтра ăна вилĕм çĕнтерчĕ. Мана çапăçури пĕр эпизод аса килет. Тин çеç тытса илнĕ дот умĕнче эпĕ юнпа вараланнă боеца куртăм. Вăл малалла ыткăнса граната вăркăнтарнă та çав минутрах вилсе кайнă. Çурри таран ăна çĕр хупласа илнĕ пулин те, вăл хăйăрпа çĕр тата юр хушшинче аллисене малалла тăссă, юлташĕсене малалла—çĕнтерӳ патнелле—çул кăтартса панă пекех выртнă. Вăл çапăçура вилĕм тупнă.

Çак боеца, хастарлăха ĕмĕрлехе чаплă кăларнăскере, искусство яланлăха сăнласа хăвармалла пулнă. Вăл ĕмĕрсенче никам çĕнтерейми туртăма, тĕрĕслĕхпе юратăва кăтартса тăтăр. Вăл аллине малалла тăсса выртни те вăл вилĕмрен хăраманнине кăтартса парать.

Çак чаплă воина эпĕ халĕ акă мĕншĕн аса илтĕм: Толстой, ман шутпа, çак паттăр боецпа юнашар тăма тивĕçлĕ пек туйăнать. Вăл та вилĕмрен пĕр хăрамасăр вилчĕ, юлашки минутчченех хăйĕн аллинчи хĕçпăшалне пăрахмасăр, нимрен хăрамасăр тата никама сутăнман искусствăна малалла çул кăтартса вилчĕ. Унăн романĕн халь çеç çырнă сыпăкĕсем искусствăн паттăрлăхне, унăн тасалăхĕпе тӳрĕлĕхне кăтартса параççĕ.

Аслă гражданин, литература полкĕсен пĕрремĕш воинĕ, вăл политикăллă чăнлăха тӳрĕ кăмăлпа пăхăнса тăма халаласа хăварчĕ. Çавăн пекех вăл тăван халăхăн творчествăллă иксĕлми туртăмне юратма халаласа хăварчĕ. Тăван халăха вăл хăйĕн искусствин пĕтĕм чăнлăхĕпе пăхăнса тăнă.

Унăн умĕнче эпир çапăçу ялавĕсене таяр, мĕншĕн тесен вăл чуралăх хăрушлăхĕпе тискерлĕхĕнчен этеме пĕтĕмпех ирĕке кăларассишĕн пыракан юлашки çапăçура харсăр боец пулнă. Ирĕклĕ этемлĕхĕн чаплă пуласлăхне тата телейне ĕненсе тăнипе вăл савăнăçлă мудрец пулнă. Вăл хăй пурăннă сталинла ĕмĕре тивĕçлĕ пулнă.

Николай ТИХОНОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 3. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактăран — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00034 Типографи № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000